## 1.Пояснительная записка.

Рабочая программа курса внеурочной деятельности «Чĕвĕлти чĕкес» для 2,3 классов разработана на основе нормативных и правовых документах:
1. Закон «Об образовании в РФ» (ФЗ РФ от 29.12.2012 года № 273).
2. Федеральный государственный образовательный стандарт начального общего образования, утвержденный приказом министерства образования и науки РФ от 06.10.2009 № 373
3. Основная образовательная программа МАОУ «Большеямашевская СОШ»
Программа относится к общеинтеллектуальному направлению внеурочной деятельности.

## 2. Курса вĕреннĕ май кĕтекен результатсем:

- ачасен шухăшлавĕ пур енлĕн аталанса, вĕсем тишкерӳ, пĕтĕçтерӳ, пĕтĕмлетӳ ĕçĕсене вĕренсе пыни:
- ачасен пуплевĕ пур енлĕн аталанса, вĕсем пуплев ĕçĕ-хĕлĕсене вĕренсе пыни:
- кĕнекепе ĕçлеме вĕренсе пыни.
- ачасен нумай пĕлес-вĕренес, харпăр хăй ĕç-хĕлне йĕркелеме хăнăхас кăмăлне чĕртсе ярасси, аталантарасси;
- вĕсене хăйсен харкамлăхне ăнланма пулăшасси, таврари тĕнчене хăйне евĕр курма-йышăнма, харпăр хăй хăтланăшĕсене хак пама, йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентсе пырасси, вĕсен ăславлă мехелне аталантарасси;
- ачасене çынсем хушшинче çураçуллă пурăнма, ыттисене пулăшма хавас пулма, пĕтĕм этемлĕх пахалăхĕсене ăнланса ăша хума пулăшасси;
- ачасене вĕсем кашниййĕ хăйĕн тăван çĕршывĕн пĕчĕк гражданинĕ пулнине ăша хума пулăшасси;
- вĕренекенсене тавралăха, çут çанталăка, харпăр хăйне, сывлăхне упрама вĕрентесси.
- ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси:
- çĕнĕ терминсемпе паллаштарасси, вĕсемпе усă курма хăнăхтарасси;
- тĕрлĕ енлĕ тишкерĕве вĕрентесси;
- капăшсене пĕрлĕхлĕ курма тата унăн пайĕсене палăртма хăнăхтарасси;
- ачасен вĕтĕ моторикине аталантарасси.
- ачасене шкул пурнăçне, йĕркесене, вĕренекен яваплăхĕсене ăнланма, ăша хывма, пурнăçласа пыма пулăшасси;
- пĕр-пĕринпе, аслисемпе кăмăллăн хутшăнма вĕрентсе пырасси;
- хутшăну тата пуплев этикетне малалла тăсасси;
- «çемье»: «йăх»: «ял-йыш» ăнлавсене уçăмлама, ăса хума пулăшасси.

**Хутла вĕрентнĕ май ачасен универсалă вĕренӳ ĕçĕсене йĕркелесси**

Вĕрентӳ ĕçĕнче кашни предмет шалашĕнчех тĕп пахалăх тĕллевĕсене шута илсе ĕçлемелле. Хутла вĕрентес ĕçре вĕсем çаксем шутланаççĕ.

- ачасен нумай пĕлес-вĕренес, харпăр хăй ĕç-хĕлне йĕркелеме хăнăхас кăмăлне чĕртсе ярасси, аталантарасси;
- вĕсене хăйсен харкамлăхне ăнланма пулăшасси, таврари тĕнчене хăйне евĕр курма-йышăнма, харпăр хăй хăтланăшĕсене хак пама, йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентсе пырасси, вĕсен ăславлă мехелне аталантарасси;
- ачасене çынсем хушшинче çураçуллă пурăнма, ыттисене пулăшма хавас пулма, пĕтĕм этемлĕх пахалăхĕсене ăнланса ăша хума пулăшасси;
- ачасене вĕсем кашниййĕ хăйĕн тăван çĕршывĕн пĕчĕк гражданинĕ пулнине ăша хума пулăшасси;
- вĕренекенсене тавралăха, çут çанталăка, харпăр хăйне, сывлăхне упрама вĕрентесси.

Йĕркелӳ ĕçĕсем ачасене вĕрентӳ ĕç-хĕлне, унăн тапхăрĕсене (ĕç тĕллевне уçăмласси, планласси, ĕçе пурнăçласси, результачĕсене хакласси-пахаласси , тӳрлетесси) уçăмласа йĕркелеме хăнăхтарассипе çыхăннă. Ку вăл питех те кăткăс ĕç. Хутла вĕрентнĕ май çак хăнăхусем майĕпен йĕркеленсе пыраççĕ.

Универсаллă пĕлӳ ĕçĕсене йĕркелессипе çыхăннă хăнăхтарусем вĕрентӳ комплексĕн кашни компонентĕнчех тĕп вырăнта. Ыттисен тата хăйсен пуплевне тимлесе ачасем чĕлхен элеменчĕсене асăрхама, вĕсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăннине курма хăнăхаççĕ. Пуплеври предложенисене, предложенири сăмахсене, сăмахри сасăсене уйăрни, каялла сасăсенчен сăмахсем, сăмахсенчен предложенисем, предложенисенчен текст калăпланă май вĕсем тишкерӳ, пĕтĕçтерӳ ĕçĕсене вĕренсе пыраççĕ.

***Предметăн пайрăм задачисем:***

- ачасен пуплевне пур енлĕн аталантарасси:
- çĕнĕ терминсемпе паллаштарасси, вĕсемпе усă курма хăнăхтарасси;
- тĕрлĕ енлĕ тишкерӳ вĕрентесси;
- капăшсене пĕрлĕхлĕ курма тата унăн пайĕсене палăртма хăнăхтарасси;
- ачасен вĕтĕ моторикине аталантарасси.

***Харкам задачçсем:***

- ачасене шкул пурнăçне, йĕркесене, вĕренекен яваплăхĕсене ăнланма, ăша хывма, пурнăçласа пыма пулăшасси;
- пĕр-пĕринпе, аслисемпе кăмăллăн хутшăнма вĕрентсе пырасси;
- хутшăну тата пуплев этикетне малалла тăсасси;
- «çемье»: «йăх»: «ял-йыш» ăнлавсене уçăмлама, ăса хума пулăшасси.

*Пур предметсене те вĕрентнĕ май пурнçăламалли задачăсем:*

- вĕренӳ ĕç-хĕлĕн уйрăмлăхне ăша хума, задачисене алла илсе, пурнăçласа пыма пулăшасси;
- тантăшĕсен тата харпăр хăй ĕçне сăнама, çитменлĕхсемпе ăнăçусене палăртма хăнăхтарса пырасси;
- пулăмсемпе япаласене, капăшсене тишкерме, танлаштарма, пĕр пеклĕхсемпе

## 3. Курсăн шалашĕ( содержанийĕ):

**Самах тытамĕ тата пулавĕ**: Сăмахăн сасăпа саспалли тытăмне тишкерме, тымарĕпе аффиксĕсене тупма вĕренесси. Сăмах тăвакан тата улăштаракан аффикссемпе паллашни, вĕсемпе усă курма хăнăхни. Пуплеве тишкерме хăнахса пыни. çын кăмăлне çавăрма, хавхалантарма, тав тума веренни.

**Текст** : Текст тытăмĕпе паллашни: пуçламăш, тĕп пайĕ, пĕтмĕш. Текстри предложенисен çирĕп йĕркине, предложенин чиккине,текстăн темине, тĕп шухăшне тупма вĕренесси.Сăнани тата ӳкерчĕк тăрăх текст хайласси..

**Предложенин пĕр йышши членĕсем:**Пĕр ыйтура тăракан,пĕр сăмахпах çыхăнакан самахсем пе паллашни.Пĕр йышши членсемпе усă курса хайлав йĕркелесси.

**Пуплев пайĕсем**:Пуплев пайĕсене ыйтăвĕсем тăрăх уйăрса илме ,пуплевре усă курма хăнăхасси.

**Текстпа ĕçлесси.** Çыхăнуллă пуплеве аталантарасси. Вуланă текстăн тĕп шухăшне харпăр хăй тĕллĕн палăртасси, унăн пайĕсем шухăш енĕпе мĕнле çыхăнса тăнине асăрхасси, текстăн планне тăвасси. Мĕн вуланине харпăр хăй тĕллĕн тунă планпа усă курса туллин, кĕскен, тата суйлавлăн аса илсе каласси. Пĕр-пĕр темăпа калав тумалли материала текстра тупса палăртасси.

Хайлаври ĕçсене тĕрĕс, йĕркипе аса илесси. Сăнлавлă (çут çанталăка, çынна, пӳрт-çурт таврашне сăнлани), уйлавлă элемент- семпе диалог кĕртнĕ текста аса илсе каласси, тӳрĕ пуплеве тӳрĕ мар пуплевпе улăштарасси.

Сăнарсен пуплев уйрăмлăхĕсене сăнасси, вĕсен ĕçĕсене, кă мăл-туйăмне (пĕр е темиçе калаври сăнарсене) танлаштарасси. Сăнарсем мĕншĕн, мĕн пирки çапла тунине каласси. Хайсем тата автор çав пулăмсемпе сăнарсене мĕнле хакланине палăртасси.

Калаври, сăвăри, юмахри сăмахсен пĕлтерĕш уйрăмлăхĕ- ăнкарасси, вĕсемпе пуплевре усă курасси. Пулăма, çут çанталăка, çынна витĕмлĕ сăнлакан сăмахсене, вĕсен майла шăвĕсене (танлаштару, эпитет, метафора, фразеологиллĕ сăмах çаврăнăшĕ - терминĕсене асăнмалла мар) хайлавра тупасси, вĕсене ăнланасси.

Сăнар ячĕпе е унăн ятне, калавçăн сăпатне улăштарса каласа парасси; калава малалла тăсасси, сăнарăн малашнехи пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен хушса каласси; сăнлавпа уйлав элеменчĕсем кĕртсе пулни-иртни, курни-илтни çинчен çыхăнуллă калав тăвасси. Халăх сăмахлăхĕ, калав, сăвă, юптару çинчен I-IV классенче илнĕ пĕлĕве çирĕплетсе пĕтĕмлетесси.

Илемлĕ литература стилĕпе ăслăлăх стилĕн уйрăмлăхĕсене асăрхама хăнăхтарасси.

Ачасен сăмах йышне куллен пуянлатса çĕнетесси. Вĕсен пуплевĕн пахалăхне (ăсталăхне, çыхăнулăхне, витĕмлĕхне, усăмлăхĕпе палăртулăхне) лайăхлатасси. Калаçура та, вуланă чух та шухăш-туйăма интонаци мелĕсемпе (хăвăртлăх улшăнăвĕ, сасă хулăнăшĕ, тăхтавсем, шухăша палăртакан пусăм, пуплев кĕвви) тĕрĕс палăртасси.

**Вулав материалĕ.** Кĕçĕн çулхи ачасем валли кăларнă чăваш, вырăс тата ытти тăванла халăхсен, ютри çыравçăсен кĕнекисем. «Тетте» журналпа «Тантăш» хаçатри материалсем.

**Вулав тематики.** Аваллăх çинчен. Ырă пурнăça ĕмĕтленсе пурăнакан халăхăн кулленхи ĕçĕсем. Ачасен ĕçĕ-хĕлĕ Чăваш, вы рăс тата ытти тăванла халăхсен юмахĕсем. Тăван халăх историйĕпе унăн ывăлĕ-хĕрĕ, ал ĕç тата ăс-хакăл культури çинчен çырнă кĕнеке- сем. Наукăпа техника темипе çырнă ачасем ăнланмалла статьясем. Темтепĕр курса çӳрени çинчен калакан хайлавсем.

**Ача-пăча кĕнекипе ĕçлесси.** Класс тулашĕнчи вулав урокне хатĕрленнĕ май кирлĕ кĕнекене харпăр хăй тĕллĕн суйласа вулама, тĕрлĕрен пулăшу кĕнекипе, хаçат-журналпа усă курма пĕлесси.

**4. Тематика планĕ.( 34** сех..)

| **Уроксен йерки** | **Тема** | **Сех. шуче** |
|---|---|---|
| 1. | Ӳкерчĕк тăрăх калав йĕркелесе çырасси. | 1 |
| 2. | Тăван Çĕршыв – пирĕн анне. Ылтăн çĕр- Чăващ сĕршывĕ. | 1 |
| 3. | Сасă. Сас палли. Вăрăм хупă сасăсене икĕ сас паллипе палăртасси. Илемлĕ сыру. | 1 |
| 4. | Чăваш халăх сăмахлăхĕ. | 1 |
| 5. | Сăпайлăх сăмахĕсем. Диалог сырасси. | 1 |
| 6. | Ĕç – пурнăç илемĕ. | 1 |
| 7. | Калав содержанине кĕскен çырасси. | 1 |
| 8. | Ĕлĕкхи пурнăçран. | 1 |
| 9. | Текст тата предложении. Пусламăшĕ тăрăх калава вĕслемелле | 1 |
| 10. | Ĕлĕкхи пурнăçран | 1 |
| 11. | Предложени. Предложени çинчен мĕн пĕлнине аса илесси. | 1 |
| 12. | И.Я.Яковлев хайлавĕсем. | 1 |
| 13. | Тăванлăх сăмахĕсем. Тăванлăх тытăмне тĕпчесе пĕлесси. Несĕл йывăссине тăвасси | 1 |
| 14. | И.Я.Яковлев хайлавĕсем. | 1 |
| 15. | Сăмах. Сăмах тытăмĕ.Ребуссем шутласа тупасси. | 1 |
| 16. | Кулленхи пурнăçпа йăла –йĕрке | 1 |
| 17. | Пĕр тымартан пулнă сăмахсем. | 1 |
| 18. | Чăваш тĕрри, чăваш юрри. | 1 |

| | | |
|---|---|---|
| 19. | Асатте- асаннесен сырулăхĕ. | 1 |
| 20. | Пĕр саспаллинчен пусланакан сăмахсенчен калав йĕркелесе сырмалла. | 1 |
| 21. | Тăванла халăх сыравсисем. | 1 |
| 22. | Заметка çырасси. | 1 |
| 23. | Эпир Улăп йăхĕнчен. | 1 |
| 24. | Япала ячĕ. Япала ячĕн пĕлтерĕшĕ тата ыйтăвĕсем. | 1 |
| 25. | Эпир – сăпайлă ачасем. | 1 |
| 26. | Глагол. Глагол пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем. | 1 |
| 27. | Чĕр чунсен тĕнчинче. | 1 |
| 28. | Паллă ячĕ. Паллă ячĕн пĕлтерĕшĕ, ыйтăвĕсем.Паллă ячĕ улшăнни. | 1 |
| 29. | Вăрсă кĕрленĕ чух. | 1 |
| 30. | Çулĕпе аслă çынсене хисеплесе чĕнесси. | 1 |
| 31. | Вăрсă кĕрленĕ чух. | 1 |
| 32. | Ӳкерчĕк тăрăх калав хайласси. | 1 |
| 33. | Ытарайми тăван тавралăх. | 1 |
| 34. | Сут тĕнче ытамĕнче. | 1 |